84.89(=Чув)
3-88
1-44808

Галина Зотова

# Çăлтăрчăксем

Национальная библиотека ЧР
4-044808

К84.89(=Чув)
З-88

ГАЛИНА ЗОТОВА

# ÇĂЛТĂРЧĂКСЕМ

## Юмахсем

Шупашкар
2007

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6
З-88

Зотова Г.В. Çӑлтӑрчӑксем. Юмахсем. – Чебоксары: Изд-во Л.А.Наумова, 2007. – 36 с.

Зотова Галина Вячеславовна 1956 çулхи раштавӑн 1-мӗшӗнче Етӗрне районӗнчи Кӑкшӑм ялӗнче çуралнӑ. Кӑкшӑмри 8 çул вӗренмелли шкултан вӗренсе тухнӑ хыççӑн Палтайри вӑтам шкулта ӑс пухнӑ. Кӑкшӑмри шкулта лаборанткӑра, ӗçпе кану лагерӗнче аслӑ пионер-вожатӑйра ӗçленӗ. И.Я. Яковлев ячӗпе хисепленекен Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнчен вӗренсе тухнӑ. 1980 çултанпа Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Штанашри вӑтам шкулта акӑлчан чӗлхи вӗрентет. Галина Зотова тӗрлӗ хаçат-журналпа çыхӑну тытать. Вӑл 1996 çулта «Хатӗр пул» журналӑн Трубина Мархви ячӗпе хисепленекен премине ача-пӑча валли çырнӑ чи лайӑх хайлавшӑн тивӗçнӗ.

«Çӑлтӑрчӑксем» – авторӑн виççӗмӗш кӗнеки.

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6

© Зотова Г.В., 2007

Издательство Л.А. Наумова
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15, к. 82
E-mail: cliobooks@mail.ru

Подписано в печать 17.07.07. Формат 60x84 1/16.
Бумага офсетная. Усл. печ. л. 5,0. Заказ № 1/07. Тираж 300 экз.

Отпечатано в типографии ПБОЮЛ Л.А. Наумова
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15, к. 82

И- 44808
Национальная библиотека
Чувашской Республики

# 37 ПĔР ТĂВАН

Пĕр уҫланкăра 37 пĕр тăван пурăннă тет. Амăшне Сас палли тесе чĕннĕ. Ҫемьере 13 хĕрпе 24 ывăл пулнă. Вĕсенчен иккĕшĕ – Ь тата Ъ – калаҫма та пĕлмен. Амăшĕ 2 ачишĕн хытă куляннă, тем пекех калаҫтарас килнĕ вĕсене, юмăҫа та кайса пăхнă, усси пулман. Э, Ĕ, Ӳ, И хĕрĕсем ҫемҫе кăмăллă, А, Ă, О, У, Ы – кăмăлĕпе ҫирĕпрех, калаҫасса та хыттăнрах калаҫма юратаҫҫĕ. Йĕкĕрешсем Е, Ё, Ю, Я пиччĕшĕпе – Й сас паллипе туслă, кăмăлне кура икĕ сасăпа шăхăркаласа ҫӳреҫҫĕ. Чĕлхесĕр Ь тата Ъ пиччĕшĕсем ҫумне хĕсĕнме юратаҫҫĕ. Сас паллин ывăлĕсем те тĕрлĕрен: ултташĕ – В, Й, Л, М, Н, Р – пĕрмай янăраса ҫӳреҫҫĕ, ялан тем ҫитмест. Ҫав хушăрах пиллĕкĕшĕ – Б, Г, Д, Ж, З – хăйсен мăшăрĕсемпе П, К, Т, Ш, С-па, пĕр ҫăвартан, шăкăлтатса пурăнаҫҫĕ.

Сас паллисем уҫланкăваррине пуҫтарăнма юратнă. «Ачасем, икерчĕ пиҫрĕ, икерчĕ ҫимелле», – чĕнчĕ амăшĕ ачисене. Ирхи ăшă сĕтпе икерчĕ ҫинĕ хыҫҫăн чашăктирĕке пуҫтарса тирпейлерĕҫ пĕр тăвансем, канма ларчĕҫ. Кĕҫех уҫланкă сас паллисен шавĕпе тулчĕ: Ю юрлать, Т ташлать, К кулать, ыттисене култарать, С сиккелет те силленет, Ҫ ҫыру ҫырать, В вулать, вĕренет, А ахăлтатать, Ч чĕпĕтет, Ы ыраттарать, Ӳ ӳлет, Ш шавлать, М макăрать, Й йĕрет, Х хитреленет, Ё ёҫлет...

– Атьăр пытанмалла выльăпăр, – сĕнчĕ амăшĕ ачисене.

– Выляр, – килĕшрĕҫ ачисем.

Кĕҫех пĕртăвансем тарса ҫухалчĕҫ.

– Эп шутлатăп пиллĕкчен,

Пултараймас вуннăччен.

Пĕрре, иккĕ, виҫҫĕ, тăваттă, пиллĕк,

Эп пуҫлатăп шырама, – тесе шутлană хыҫҫăн амăшĕ ачисене шырама пуҫларĕ.

Унталла пăхрĕ, кунталла – пĕр ача та çук: «Ау-у, ăçта эсир, ман шăпăрлансем; Çухатрăм пулас ачамсене», – кулянсах кайрĕ хайхискер.

– Ихи-хик! – чăтса тăраймарĕç лешĕсем, сиксе тухрĕç: юман çинчен – Ю, вĕрене çинчен – В, шĕшкĕ çинчен – Ш, чăрăш çинчен – Ч, хурама çинчен – Х, йăмра çинчен – Й, каврăç çинчен – К, çӳçе хушшинчен – Ç.

Х хурама çинчен анчĕ те хурăн çине пытанчĕ, Ç çӳçе хушшинчен тухрĕ те çеçпĕлсем хушшине пытанчĕ, Ш – шĕшкĕ çинчен шăнкăрав курăкĕ айне, К – каврăç çинчен куршанкă çине, В – вĕрене çинчен вĕлтрен ăшне, Л – лили çинчен лантăш уйĕ çине куçрĕ. У – утмăл турат, С – салтак тӳми, А – ама хупаххи, П – пилеш çинче вырăн тупнă иккен. Шырасан-шырасан мĕнпур ывăл-хĕрне шыраса тупрĕ Сас палли. Каçалапа пĕр тăван сас паллисем хăйсен тусĕсем патне кайма шутларĕç: Т – тилĕ тус патне, М – мулкач патне, У – па К упа утаманпа кашкăр кашамана курма, Ч – чĕрĕп, Ç – çĕлен, П пăлан пурăннă çĕре çул тытрĕç. Ĕçеç ниçта та каяймарĕ, ăна амăшĕ ĕне сума шаннăçке, Каярах ун пĕр тăвансене ăшă сĕтпе хăналамалла.

Çавăн чух вĕсем кашни хăй вырăнне тупса ретĕн ларса тухаççĕ: А Ă Б В Г Д Е Ё Ĕ Ж З И Й К Л М Н О П Р С Ç Т У Ӳ Ф Х Ц Ч Ш Щ Ь Ы Ъ Э Ю Я.

Акă вăл – чăваш алфавичĕ!

## ЧĔР ЧУНСЕН УРОКĔНЧЕ

Учительсене уяв ячĕпе экскурсие, вăрман варринче вырнаçнă шкула, уçă урок итлеме илсе кайрĕç. Уçланкăна пухăннă чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕке упа

вĕрентет. Парта вырăнне тунката, вĕренекенсем хурăн хуппи çине ручкăпа мар, чечек тунипе çыраççĕ.

– Пурте лайăх вĕренеççĕ-и? – интересленчĕç ялти шкултан килнĕ хăнасем.

– Пакша çури маттур. Вăл ытгисен вĕреннине уçланкăри хурăн тăрринче итлесе ларма юрататъ, хăй тĕллĕнех вулама-çырма хăнăхрĕ, – савăнăçне пытармарĕ упа.

– Кутăнлашакансем çук-и?

– Епле-ха унсăрăн? Мулкач урипе çырать те хăлхипе сăрласа хурать. Эпĕ ăна вăрçатăп, «2» паллă та лартса пăхатăп – усси сахалрах. Йĕрет, усал йăлине пăрахаймасть.

– Пурте тăрăшса вĕренеççĕ-и?

– Чеереххисем те пур. Тилĕ эпĕ сисиччен пакша тетрадĕнчен çырса илет, иккĕшне те «5» лартма тивет. Юлташĕнчен çырса илнине пĕлетĕп пулин те, тилле «пиллĕкпе» савăнтаратăп: йăлтах тĕрĕс, пĕр йăнăш та çук-çке, – чунне уçрĕ упа.

Çав вăхăтра икĕ вĕренекен «пăшăл пăтти пĕçерчĕ».

– «5» паллăшăн сана пулă çитеретĕп, – пăшăлтатрĕ тилĕ пакшана.

– Пулă юратмастăп, – тавăрчĕ лешĕ.

– Чăх ашĕпе хăналатăп.

– Чăх ашĕ те çиместĕп.

– Чăх ашĕ те килĕшмест-и? Тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтеретĕн. Мĕн çисе пурăнатăн вара?

– Мăйăр шĕкĕлчеме юрататăп.

– Ăçтан мăйăр тупам-ши? – пăшăрханчĕ тилĕ çури.

Вăл упа сисиччен урокран тухса тарчĕ, пакша йăвине шыраса тупрĕ те мăйăр вăрларĕ. Таврăнсан пакша çурине кучченеçпе хăналарĕ.

– Тавтапуҫ, – хӗпӗртерӗ лешӗ, упа сисиччен хӑйӗн вырӑнне, хурӑн тӑррине, хӑпарса ларчӗ, хӗпӗртесех мӑйӑр шӗкӗлчерӗ.

– Урока кая юлса килекенсем ҫук-и? – ыйтрӗҫ учительсем.

– Кашкӑр ҫури час-часах урок пуҫлансан ҫеҫ килет. Пӗрремӗш урока, математикӑна, тӑтӑшах сиктернӗрен задачӑсене мӗнле шутламаллине ӑнкараймасть. Кашкӑр, итле-ха, санӑн 2 хӑлха: сылтӑмми тата сулахайӗи. Пӗр хӑлха ҫумне теприне хушсан икӗ хӑлха пулать. Хӑлхасӑр кашкӑр мар вӗт эсӗ, – ӑс пама тӑрӑшрӗ упа, анчах усси пулмарӗ. Чӗр чунсем кашкӑр ҫурин урисене хушсакӑларса та пӑхрӗҫ, ҫапах лешӗ нимӗн те ӑнланмарӗ.

– Эпӗ кашкӑр ҫурине мӗнле вӗрентмеллине пӗлетӗп, – чив-чив! чӗвӗлтетрӗ турат ҫинче ларакан пӗчӗк кайӑк.

– Мӗнле? – пурте ун еннелле ҫаврӑнчӗҫ.

– Пӗлетӗн-и, кашкӑр ҫури, улӑхра сурӑх чупать, унпа пӗрлех путекӗ. Кала-ха, ҫерем ҫинче миҫе чӗр чун чупать?

Кайӑк чӗппи каласа пӗтерейменерӗ – кашкӑр ҫури ялт! сиксе илчӗ те уялла вӗҫтерчӗ. Тинех математикӑна ӑнланчӗ курӑнать.

Учительсене урок килӗшрӗ. Чӗр чунсем вӗсене пӗчӗк концертпа савӑнтарчӗҫ: кайӑксем юрӑ шӑрантарчӗҫ, куян ҫурисем ташларӗҫ, пакша фокуссемпе тӗлӗнтерчӗ, чӗрӗп сӑвӑ каларӗ. Чӑннипех те маттур иккен вӑрманти туссем!

Уроксем хыҫҫӑн пакша ҫури килне чупса ҫитрӗ, кушелӗ самаях пушаннине курсан йӗрсе ячӗ: – Кам мана кӳрентерме хӑйнӑ-ши?

## ЮТ ÇĔР-ШЫВРА

Саша улттăмĕш класра вĕренет. Ăслă-тăнлă ача, анчах кахал. Хăй юлхавланнине пулах юлташĕсемпе тан ĕлкĕрсе пыраймасть, уроксенче час-часах «иккĕсем» çаклатать.

Вырăс чĕлхи урокĕнче ачасем кавир-самолет çинчен юмах вуларĕç. Сашăна та юмах килĕшрĕ. Вĕрентекен: «Енчен те сирĕн кавир-самолет пулсан эсир ăçталла çул тытăттăр?» – тесен, кашниех пĕр-перинпе тупăшса хăйĕн шухăшне пĕлтерме васкарĕ. Ирина çурçĕр полюсне çитсе курасшăн иккен, Инга – тинĕс тĕпĕнче, Вася – çичĕ тинĕс леш енче, Коля – ют планета çинче, Миша – кăнтăрти çĕршывсенче, Оля – юмах тĕнчинче пуласшăн. Саша та шухăша кайрĕ: «Чăнах та, ăçта кайса курмалла-ши? Ăçта интереслĕрех? Каяс-тăк каяс, ют çĕр-шывах çитсе курас. Аслă Британире пулса курăттăм, акăлчанла калаçса çынсене тĕлĕнтерĕттĕм. Атту мана акăлчан чĕлхине вĕрентекен ялан вăрçать: «Уроксене пачах хатĕрленместĕн, ĕçлекен пуçна ĕçлеттерместĕн, – тет. Вĕсе каятăп та унти çынсене хам акăлчан чĕлхине вĕсемпе танах пĕлнине ĕнентеретĕп!»

Арçын ача çапла шухăшлама ĕлкĕрчĕ çеç – таçтан çавра çил ахăрса тухрĕ те ачана кавир-самолетпа чĕркерĕ, ăна-кăна ăнкариччен Сашăна темле ют хула урамне, ача-пăча теттисем сутакан лавкка умне персе хăварчĕ.

Урамра халăх нумаях мар. Саша хăра-хăрах лавккана кĕчĕ. Кунти халăх темĕнле ăнланмалла мар чĕлхепе калаçнине илтсен тĕлĕнчĕ. Тимлĕрех итлесен хăй Англие çитнине ăнланчĕ, питĕ хĕпĕртерĕ: «Тинех эпĕ хамăн пултарулăхпа çынсене тĕлĕнтерĕп!»

– Give me this toy! – чекне сутуҫа тăсса парать пĕр арҫын ача.

«Мĕнле туй пирки калаҫать вăл? Ăҫта туй? Нимĕнле юрă сасси те илтĕнмест-ҫке!» – лавккана туй ҫитсе кĕрессе кĕтсе йĕри-тавра пăхкалать Саша.

Сутуҫă арҫын ачана упа ҫури тыттарчĕ, лешĕ хĕпĕртесе килнелле чупрĕ.

– Give me this box! – ыйтать тепри.

«Боксла вылясшăн пулас, кампа вылять-ши?» – тĕлĕнчĕ Саша сутуҫă лешне ещĕк тыттарнине курсан. Вăл нимĕн те ăнланмарĕ, ҫапах такам боксла вылясса кĕтсе тăчĕ.

– This car is cheap, – тенине илтсен чĕпĕсене шырарĕ, вĕсем шиплетсе ҫӳренине курасшăн пулчĕ – каллех кураймарĕ.

Ҫапла чылайччен лавкка тăрăх утса ҫӳрерĕ, нимĕн те туянаймарĕ. Ҫынсене мĕншĕн пĕр япала ыйтсан тепĕр япала панине те ăнланмарĕ. Акă пĕри камера илесшĕн, ăна фотоаппарат пачĕҫ. Саша хăй ют ҫĕршыва килсе ҫакланнăшăн кулянма пуҫларĕ. Хырăмĕ те выҫрĕ. Кафене кĕрсе апатланĕччĕ – укҫи ҫук. Ун кĕсйинчи вак укҫапа ҫитермеҫҫĕ ҫав кунта, доллар кирлĕ теҫҫĕ. Киле каяс – кавир-самолет ниҫта та курăнмасть.

Каҫ пулчĕ. Урамра халăх ҫук, машинăсем ҫеҫ пĕр вĕҫĕм каялла-малалла чупаҫҫĕ. Саша хăра-хăрах пĕр таксист патнелле ҫывхарчĕ. Шоферĕ шăпах вырăсла ăнланать иккен. Вăл ачана пулăшма килĕшрĕ, телефон туртса кăларчĕ те такампа калаҫса илчĕ. Ҫак самантрах такси умне кавир-самолет вĕҫсе килчĕ. Вăл ачана киле леҫсе ячĕ.

Ҫакăнтанпа Саша лайăх вĕренет, уйрăмах акăлчан чĕлхине куллен «шĕкĕлчет». Кам пĕлет, тен, каллех ҫавăн пек пăтăрмаха лекĕ те каллех путишле самантран тухма тивĕ. Тепрехинче вăл аптрамастех!

# ЛЕВА – АРĂСЛАН

Лева Иванов гороскоп тăрăх арăслан. Çак тискер чĕр чун хуçаланма юратать, хăйĕн çулĕ çине тăракана тӳсме пултараймасть, яланах малта пуласшăн. Хăш-пĕр чухне арăслан наянланма кăмăллать. Вара кунĕпех çывăрать, тĕмсем айне кĕрсе выртсан йĕри-тавра мĕн пулса иртнине те пĕлмест, интересленмест те. Хăйĕн тăрăх шăши-каюра, мулкач-тилĕ сиксе çӳренине те сисмест. Канлĕ пурнăçшăн антăхсах каять, анчах хăй пĕртте ĕçлесшĕн мар, çын ĕçĕпе ырă курса пурăнма хăнăхнă.

Пĕррехинче Лева гороскоп кĕнекине вуласа хăй арăслан пулнине пĕлчĕ те самаях тĕлĕнчĕ. Ăна ятне те арăслан пек хастар пултăр тесе панă-мĕн. Лева нихăçан та чапшăн çунман, укçашăн антăхман, наянланса та выртман. Хуçаланма та юратмасть вăл. Çак йăваш та ырă кăмăллă ача амăшне итлет, ăна яланах пулăшма тăрăшать, шыв кӳрет, сарайран тислĕк кăларать, пахчара тар тăкать, ашшĕпе пĕрле кĕтӳре те çӳрет.

Гороскопа вуласа тухсан ача шухăша кайрĕ. Хăш-пĕр чухне ăна тус-тантăшĕсем кӳрентерни те пулать. Тен, чăн та, арăслан пулса пăхмалла, ун чухне ăна никам та çиллентерме хăяймĕ!

Çапла шухăшласа илчĕ çеç ача – хăйĕнче вăй-хăват хушăннине туйрĕ. Хăй те сисмерĕ – умĕнче утса пыракан Никитăна ура хурса такăнтарчĕ.

– Эсĕ мĕскер? – кăмăлсăрланчĕ лешĕ.

– Выляс килчĕ! Ха-ха-ха! – ахăлтатса кулса ячĕ Лева.

– Вăйă шутласа тупнă та вара, – кӳренчĕ тантăшĕ.

– Лайăххине ху шыраса туп! – ихĕрме пăрахмарĕ хайхи «арăслан».

«Тата мĕнле киревсĕр ĕç туса савăнам-ши?» – шухăшларĕ вăл.

Акă Кольăна тĕл пулчĕ. Кăçал вĕсен пан улми ăнса пулнă. Коля – ырă кăмăллă ача: тантăшĕсене пан улмипе хăналать, килтен тулли сумка йатса килме ўркенмест.

Левăн алли Коля еннелле тăсăлчĕ, лешĕ çиме хатĕрленнĕ пан улмие туртса илчĕ.

– Пан улми çиес килет-и? Манăн сумкăра татах пур. Ун пек ашкăнмасăрах хăналама пултаратăп, – тĕлĕнчĕ тусĕ.

– Ман нумай çиес килет! Пĕрре мар, нумай! Халех хăналанă пултăр!

Çапла алхасса çўресе Лева юлташĕсене хытах тĕлĕнтерчĕ. Кунĕпе ашкăнса хăй те йăлăхрĕ, юлашки урокра ларнă чухне тĕлĕрсе кайрĕ. Музыка урокĕнче класра илемлĕ юрă шăраннăран, çепĕç кĕвĕ хаваслă ĕмĕтсем çуратнăран ача тутлă ыйха путрĕ. Тĕлĕнмелле тĕлĕк курчĕ.

Лева пĕр уçланкăра пурăнать иккен, вăл – чăн-чăн арăслан. Ун умĕнче мĕн пур чĕр чун упаленсе, пуç тайса çўрет, вăл хушнине те çийĕнчех, пĕр сăмахсăрах пурнăçлаççĕ. Вăт ырлăх Левăн: мĕн çиес килет – çи, мĕн тăвас килет – ту. Арăсланăн пĕтĕм вăйĕ сылтăм уринчи чĕрне вĕçĕнче: урине çĕклет те чĕр чун еннелле сулать, лешĕ ăна тўрех ăнланать, хушнине пурнăçлать.

Малтан интереслĕччĕ-ха. Анчах каярахпа Левăна кунашкал пурнăç йăлăхтарчĕ. Никам та ăна хирĕç шарламасть, витлесе те кулмасть, тупăшмасть, харкашмасть... Пурте пĕкĕрĕлсе çес çўреççĕ, арăсланăн сылтăм ури çĕкленессе кĕтсе лараççĕ.

– Кай, кай! Кун пек пурнăç мана кирлĕ мар! – Лева сылтăм уринчи чĕрнине хăйпатса ывăтасшăн пулса хускалчĕ те... вăранса кайрĕ.

– Иванов, мĕн пулчĕ? Тĕлĕрсе кайрăн-им? Хăрушă тĕлĕк куртăн-им? – ыйтрĕ вĕрентекен ача çине куларах пăхса.

Йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ арçын ача ун çине пăхса илчĕ те хăйĕнпе пулса иртни тĕлĕкре çеç пулнине ăнланчĕ, лаштах сывласа ячĕ.

– Ан тив, гороскоп тăрăх арăслан пулам. Хамăн характера пур-пĕрех улăштармастăп. Унччен пекех лайăх ача, 6-мĕш класра вĕренекен Лева Иванов пулам, – терĕ вăл.

## ÇĂЛ КУÇ ПУЛĂШНĂ

Арăмĕ вилсен пĕр пуян тепре авланнă. Хăйĕнчен чылай çамрăкрах хитре пике ун арăмĕ пулма килĕшнĕ.

Малтанлăха чиперех килĕштерсе пурăннă-ха вĕсем, анчах пуянăн хĕрĕ çитĕннĕçемĕн кунран кун чиперленсе пынă, таврари чи илемлĕ хĕр пулса тăнă. Пуян арăмĕ çулсем иртнĕçемĕн çамрăк чухнехи хитрелĕхĕ çухалнине сиснĕ те хӳхĕм хĕре кĕвĕçме пуçланă. Çавскер ăна ир пуçласа сĕм çĕрлеччен пĕр канмасăр ĕçлеттернĕ,хăйсенчен начар çитернĕ, хĕре хăш чухне апат юлашки те лекмен.

Пуян хăйĕн мулне сыхлама икĕ пысăк йытă усранă. Вĕсене пăхса тăма, уйрăм апат пĕçерме ятарлă тарçă тытнă. Тарçă пуянăн хĕрне шелленĕ, анчăксем валли хатĕрленĕ яшкана хуçа арăмĕ сисиччен хĕре антарса панă, юлашкине йытăсене çитернĕ. Çапларах майлаштарса пурăннă.

Анчах харсăртарах йытти яланах тăраниччен çинĕ, иккĕмĕшĕ выçă юлнă та çилленнĕ: «Ман апата çисе пурăнать!» – шăлне кăчăртаттарнă вăл.

– Мĕнле-ха капла? Халиччен çĕре кĕмеллеччĕ-çке, вăл вара хитреленнĕçемĕн хитреленет, – тĕлĕннĕ пуян арăмĕ.

Мăшăрĕ час-часах тавар турттарма çÿренĕ. Вăл черетлĕ çул çÿреве кайсан арăмĕ хĕре сыхлама шутланă.

Хĕр яланхиллех ирех тăнă, кил-çурта тирпейленĕ, картишĕнче çÿпĕ шăлнă. Çак вăхăтра тарçă йытăсем валли апат янтăланă, хĕре çитерне хыççăн юлнине йытăсене лартса панă.

– Сана йытăсене тăраничченех çитерме хушнă, çавăншăн укçа тÿлеççĕ вĕт! Эсĕ вара хĕре тăрантаратăн! – ятланă пуян майри. – Халех тасалнă пултăр!

Тарçă кутамккине пуçтарнă та пуян хĕрĕпе сыв пуллашса килнелле çул тытнă. Вăл кайсанах майра йытăсене сăнчăртан вĕçертсе янă, хĕре çурса тăкма хушнă. Тăраничченех çиейменшĕн тарăхнă йытă тÿрех хĕр хыççăн ыткăннă, ăна çыртса амантнă. Тепри, ирĕке тухнишĕн хĕпĕртенĕскер, тÿрех уялла вĕçтернĕ. Тусĕ çухалнине асăрхасан тепĕр йытти те хĕр çинчен мансах уялла чупнă.

Пуян арăмĕ: «Тинех хĕртен хăтăлтăм!» – тесе савăннă.

Тарçи ытла инçе кайма ĕлкĕреймен-мĕн, çул тăрăх пуянăн йыттисем вăшкăртса иртсе кайнине курсан вăл каялла таврăннă. Ахлатса выртакан хĕрĕн суранĕсене сиплеме асамлă çăл куçран пулăшу ыйтма шутланă.

Тарçă часрах тăрантас кÿлнĕ, хĕре тÿшек çине выртарнă та çăл куç патне васканă.

Уй варринче 300 çулхи юман ÿснĕ, ун тăрринче 300 çулхи тăмана пурăннă. Юман патĕнче асамлă çăл куç шывĕ шăнкăртатса юхнă. Чирлисем кунта сипленме çÿренĕ, шыва кĕнĕ. Малтанах шывĕ питĕ сивĕ-мĕн, алурана çыхлантарсах лартнă вăл, анчах шывран тухсан кĕлетке вĕриленсе кайнă, чир-чĕр çухалнă. Ал-ура суранĕ те çак шывпа çусан тÿрленнĕ. Çăл куçа тăмана сыхланă,

вăл ирĕк памасăр никамăн та сиплĕ шывпа усă курма юраман, сăлтавне хăй çеç пĕлнĕ.

Тарçă хĕре сыватма шăпах çак çăл куç патне илсе килнĕ.

– Ырă кун пултăр, тăмана тус! – сăмах хушнă вăл. Лешĕ чĕнмен.

– Еплерех пурăнатăр? Сывлăхсем чиперех-и? Хăлхăр ыратмасть-и?

Тăмана нимĕн те шарламан.

– Хисеплĕ тăмана, эсир 300 çул çутă тĕнчере пурăнатăр теççĕ, халап-ши ку е чăн-ши?

– Çапла, 300 çул тултартăм, шăп та лăп паян çутă тĕнчене килнĕ эпĕ, – тинех сас панă тăмана.

– Çуралнă кун ячĕпе сире! – çумри çăкăр татăкне тĕпретсе тăманана сапса панă тарçă. – Çулăрсем сахал мар, вăй-халăр та пĕтсе пырать пулĕ. Куç вăйĕ те чакрĕ-тĕр, çăл куçа сыхлама çăмăлах мар ĕнтĕ сире, – шелленçи пулнă вăл.

– Мана çăлкуç пулăшать, – хуравланă вĕçен кайăк.

– Çăл куç? Ĕненместĕп.

– Ĕненместĕн пулсан, кур, – тăмана юман çинчен вĕçсе аннă та çăлкуçра çăваннă, çамрăкланнăскер, çийĕнчех юман çине вĕçсе хăпарнă.

– Çак çăл куç шывĕ сиплĕ теççĕ, чăнах-и?

– Чăнах. Ку шыв пур чиртен те сиплет, кирек мĕнле сурана та хăвăрт тÿрлетет. Суккăррисене – куракан, илтменнисене илтекен тăвать. Таса шыв чуна та тасатать, усал шухăшсене аякка сирсе ярать, сивĕ чĕреллисене ырă кăмăллă тăвать, – ăнлантарнă тăмана. – Анчах чирлĕ çыннăн шыв хăватне ĕненмелле. Тата çăл куçпа кашни кунах усă курма юрамасть, çут çанталăкри тĕрлĕ пулăмпа, планетăсемпе, çăлтăрсемпе çыхăннă ку.

Ыттисем çакна пӗлмеççӗ, эпӗ çеç сисетӗп, çавӑнпа та инкек-мӗн пуласран çак юман тӑрринче кунлатӑп.

– Паян çӑл куç шывӗ сиплӗ-и?

– Паян лайӑх кун, – çапла каланӑ та тӑмана çунаттисемпе сулса хӗре çӑлкуç шывӗпе пӗрӗхнӗ. Суран-сем çийӗнчех тӳрленнӗ, пике малтанхинчен те чиперте-рех пулса тӑнӑ.

Тарçӑпа хӗр хӑра-хӑрах киле таврӑннӑ. Çав кун пу-ян майри йыттисене кӗтсе илеймен, тепӗр кун та кӗтнӗ. Йытӑсем çуккине курсан мӑшӑрӗ вӑрçассине пӗлнӗ вӑл, çавӑнпах вӗсене шырама тухса кайнӑ.

Çулӗ шӑпах тӑмана сыхлакан çӑлкуç умӗпе иртнӗ. Тӑмана, çӑл куçран вӑй-хӑват илсе яшланнӑскер, юрласа, çунаттисене сулласа ларнӑ. Хӗрарӑм çывхарнине асӑрха-сан ӑна çӑл куç умӗнчен сирсе яма тӑрӑшнӑ: шӑпах япӑх кун пулнӑ-мӗн, шывра усал вӑйсем хуçаланнӑ.

– Кӑш-шша! Вилме маннӑскер! Кайса лар хӑвӑн вы-рӑнна! – хӑлаçланнӑ хӗрарӑм.

– Ан çывхар! – çунаттисемпе сулкалашнӑ кайӑк.

– Эх, путсӗр кайӑк, урлӑ куç! – тем те пӗр каласа хӑртнӑ майра, кайӑка çуначӗсенчен çавӑрса тытнӑ та шывалла ывӑтнӑ. Анчах тӑмана юман тураттинчен çакӑнса юлма ӗлкӗрнӗ, хӗрарӑм хӑй шыва кӗрсе ӳкнӗ.

Шывран аран-аран сӗтӗрӗнсе тухнӑ вӑл. Килне çитсен тӳрех алла тӗкӗр тытнӑ. Куç кӗскинчи ватӑ кар-чӑка курсан хӑйӗнчен хӑй хӑранӑ.

– Кам манран кулать? – тӗлӗннӗ вӑл.

Хыçалалла çаврӑнса пӑхнӑ. Никам та çуккине кур-сан каллех куç кӗски çине тинкернӗ, хирӗç пӑхакан карчӑкран мӑшкӑлласа кулма пикеннӗ:

– Тьфу, вилме маннӑскер! Мӗн туса тӑратӑн кунта? Тухса кай ман пӳлӗмрен! – çапла каланӑ та куç кӗски

çинчи карчăк пĕкĕрĕлме пуçланине асăрханă. Куç умĕнчех пĕчĕкленсе пынине хăй те сисмен, йытă пулса тăнă та уялла чупса куçран çухалнă.

Çавăнтанпа пуян арăмне никам та курман, чĕрех-ши, вилнĕ-ши, – сас-хура пулман.

Пуян килне таврăнсан ăна хирĕç хăйĕн хитре хĕрĕ тухнă. Мăшăрĕ çухалнине пĕлсен тĕлĕннĕ хуçа, тарçи кунта мĕн пулса иртнине каласа парсан ĕненнĕ.

Пурăна киле хĕр валли мăшăр та тупăннă. Вĕсем тарçăна та манман, чаплă кермен лартса, çĕр уйăрса панă. Пуян урăх авланман тет, мăнукĕсемпе савăнса пурăннă.

## ЫВĂЛ ШЫРАНИ

Карчăкпа старик виçĕ ывăл пăхса çитĕнтернĕ тет. Кунĕн-çĕрĕн ырми-канми тăрăшнă, ачисене пурăнма вĕрентнĕ, çирĕп сывлăх парнеленĕ.

Амăшĕ яланах хĕвелтен маларах тăнă-мĕн. Куçа уçнă-уçман тŭпенелле тинкернĕ те хĕвел вăранманнине кура ăна тăратма пикенет тет.

– Хĕвелпи! Тăма вăхăт!

– Халех!

Хĕвелпин кăмăлĕ тĕрлĕрен çав. Хăш-пĕр чухне пĕр сăмахсăрах вăранать те çŭçне турама пикенет.

Çŭçне вăл çывăрас умĕн майлаштарса пуçĕ тавра çавăрса çыхать. Хăш чухне Çилпи Хĕвелпи патне выляма килсен ытларах ашкăнать, унăн çŭçне пăтраштарсах ярать. Çавăнпа та Хĕвелпин ирхине çŭçне ытларах турама тивет, акă мĕншĕн хĕрарăмăн ăна ытларах кĕтмелле.

– Хĕвелпи! Тăма вăхăт!

Хĕвелпи те ача евĕрлех çав. Илтменçи пулса тепĕр аякĕ çине çаврăнса выртать.

– Хĕвелпи! Вăран!

Тăмах тивет иккен. Анасласа илет те çĕр çине тĕтре сапалать. Ылтăн кăкшăмран юхса тăракан ылтăн шывпа питне çăвать, тинех вăранса çитет. Хăвăрт тумланать, мăйĕ çине ылтăн эрешсем çакать, пуçне ылтăн турапа турать, çӳçне кĕлетки тăрăх сапаласа ылтăн кĕпине ылтăн арчаран кăларса тăхăнать, çĕр çинелле тинкерет. Çынсем халĕ те вăранманнине курсан:

– Хĕ, эпĕ пуринчен маларах вăраннă иккен, – тесе хĕпĕртесех каять, кулма пуçлать.

Çапла çĕр çине унăн ăшă кулли сапаланать, ылтăн шевли çуталать.

Ир пулать те, каç килет. Вăхăт сисĕнмесĕрех шăвать. Кун хыççăн кун, çул хыççăн çул. Виçĕ ывăл, виçĕ пăхаттир ӳссе те çитрĕç. Тĕнче курма тухса кайма шутларĕç хайхисем. Инçе çула тухас умĕн ашшĕ-амăшĕ ывăлĕсене тулли сĕтел хушшине пуçтарчĕ, пил сăмахĕ каларĕ.

– Тăван кил сире яланах таравать. Ăна манса ан кайăр. Тăван чĕлхерен ан писĕр. Киле таврăнас çулăр яланах такăр пултăр, аçăр-аннĕре, тăван киле нихăçан та манса ан кайăр. Тăван чĕлхерен ан вăтанăр, унпа мухтанăр.

Сыв пуллашас умĕн ывăлсем пӳрт умне улмуççи лартса чĕртрĕç тет. Куллен пăхса тăнипе улмуççисем чиперех вăй илнĕ.

Амăшĕ чăваш йăли-йĕркипе ывăлĕсене сывлăм шывĕпе пĕрĕхрĕ, кашнине сăмах кушелĕнчи чи ăшă сăмах парнелерĕ. Кушелте вĕсем нумай, анчах та виççĕмĕш ывăлĕ валли çавах сăмах сахалрах пулчĕ. Сывлăмĕ те Хĕвелпи çӳлелле улăхнăçем типе пуçларĕ, ăна сывлăм шывĕ те сахалрах тиврĕ.

– Ывăлăм, тăхта-ха, кĕт кăштах, ыран ирхине мĕн калайманнине каласа пĕтерĕп, – ӳкĕтлерĕ амăшĕ. Анчах ӳкĕте кĕртеймерĕ. Пиччĕшĕсенчен юлас темерĕ лешĕ, пĕрлех çула тухрĕ.

Ашшĕпе амăшĕ иккĕшĕ кăштăртатса пурăнаççĕ, пӳрт умĕнче ӳсекен улмуççисене пăхсах тăраççĕ, шăвараççĕ, кăпкалатаççĕ, çум курăкран тасатаççĕ. Ывăлĕсем хăйсем те тăван киле таврăнсан чи малтан улмуççисене сывлăх сунаççĕ, унтан тин кĕреççĕ. Ашшĕ-амăшне кил таврашĕнчи йывăр ĕçсене пурнăçлама пулăшнă хыççăн каллех çула тухаççĕ.

Вĕсем чылай çĕршывра пулса курчĕç, анчах тăван кил çинчен манса каймарĕç. тăван чĕлхерен писмерĕç. Тăван кил, тăван кĕтес. Пӳрт умĕнче ешерекен улмуççисем... Анне каланă çепĕç сăмахсем, вăл пĕçернĕ икерчĕ-кукăлĕ, атте ăшши, унпа пуплени. Мĕнле манăн çакна? Улмуççисем ывăлĕсен кăмăлĕсене систерсех тăраççĕ. Енчен те хăшĕ те пулин чирлесен йывăç усăнать, амăшĕ хăвăртрах ун йĕри-тавра чупма пуçлать: шăварать, кăпкалатать, юрла-юрла йăпатать. Кĕçех улмуççи сывалать, амăш вара савăнать, ывăлĕн сывлăхĕ лайăхланнине туять унăн чĕри.

Ашшĕ-амăшĕн çуралнă кунĕсем çитеспе кушеле чикнĕ улмуççи çулçи /ăна амăшĕ кашни ывăлне сăмса тутрипе чĕркесе хурса панă/ чăштăртатма пуçлать, ывăлĕсене киле каймалли вăхăт çитнине систерет. Енчен те хăшĕ те пулин мансан улмуççи пăлхана пуçлать, хăй тĕпренчĕкне – çулçине – хытăрах чăштăртаттарать. Кĕçех тăвансем киле пуçтарăнаççĕ, çемье уявĕ пуçланать. Кашни çулах савăнăçĕ пӳрт тулли, парнийĕсем йăтайми, юрри-ташши, шӳт-такмак, телейлĕ кулă, сĕтел çинче çавра çăкăр, чăкăт-хуплу...

Ч-44808

Национальная библиотека
Чувашской Республики

Çулсем иртнĕçемĕн ывăлĕсем авланчĕç, тĕнче тăрăх саланчĕç.

Пĕр çулхине тем пулчĕ, кĕçĕн ывăл лартса хăварнă улмуççи хăрма пуçларĕ. Ашшĕ-амăшĕ тем пек тăрăшсан та йывăça сыватаймарĕç. Ывăлĕпе инкек-тавраш пулнă пуль тесе ашшĕ çула тухрĕ, хăйпе пĕрле улмуççи туратне илчĕ. Вăл кăтартнă çулпа утрĕ.

Утсан-утсан çул чаплă пĕр кермен умне çитсе чарăнчĕ.

Алăка шаккарĕ. Алăк уçăлмарĕ. Каллех шаккать, каллех сас паракан çук. Виççĕмĕш хут шаккасан çеç шалтан йытă сасси илтĕнчĕ. Алăк хăлăпĕ вĕçерĕнчĕ те йытăпа пĕрле ывăлĕ тухса тăчĕ.

– Кам унта? Мĕн кирлĕ?

– Сывă-и, ывăлăм!

– Мĕн чăрмантарса çӳретĕн, çывăрма памастăн?

– Сывă-и, ывăлăм! Чирлерĕн-им?

– Ут хăв çулупа!

– Ваня, кам чăрмантарса çӳрет унта? Хуп алăка! – илтĕнчĕ сасă. Ывăлĕн арăмĕ иккен, кинĕ.

– Сывă-и, кинĕм, аннӳ салам каларĕ, кучченеçсем парса ячĕ, акă тыт-ха.

– Пирĕн хамăрăнах апат-çимĕç çителĕклĕ. Чиксе хур кушеле.

Ывăлĕпе кинĕ хăйне палламаннине кура тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ ашшĕ пӳрте кĕме тăчĕ. Йытă вĕрме пуçларĕ, иртме ирĕк парасшăн мар, хирĕç сикет, чăрмалать.

Ашшĕ нимĕн тума аптрарĕ, аллине кĕсйине чикрĕ те тĕрленĕ ал шăлли туртса кăларчĕ, вĕрекен йытă еннелле сулчĕ:

– Кай, пăрăн çул çинчен! Çухал куç умĕнчен!

Çапла калама ĕлкĕрчĕ çеç, йытта тем пулчĕ – уялла тухса вирхĕнчĕ. Старик ним хăрамасăр пӳрте кĕчĕ. Йăлтăртатакан пӳлĕм, йăлтăркка кравать, йăлтăркка сĕтел-пукан, пĕртен-пĕр тĕкĕр, урăх ним те курăнмасть унта. Ним тума аптранипе, ывăлĕпе кинĕ хăйне палламаншăн кулянипе вăйĕ пĕтсе килнине сисрĕ ватă, вырăн çине пырса ларчĕ.

Тем тарлаттарса ячĕ ăна ун чух. Ал шăллие туртса кăларчĕ те питне-куçне шăлса типĕтрĕ, ăна кравать çине асăрханса хучĕ (ара, арăмĕ тĕрленĕ-çке ăна). Ал шăлли кравате сĕртĕнсен тем шартлатрĕ, аçа çиçĕм çиçрĕ, пӳрт чĕтренчĕ, минтер айĕнчен урпа, пăрçа, вир тата тем те пĕр урайне сапаланчĕ. Унтан пӳрте чӳречерен кайăк-кĕшĕк вĕçсе кĕрсе тулчĕ, тырă пĕрчисемпе хăналанчĕç те шуйханса таçта кайса çухалчĕç. Пӳртри ылтăн куç умĕнчех таçта кайса çухалчĕ.

Ахаль кравать, ахаль тĕкĕр, ахаль сĕтел-пукан.

– Ай, аттеçĕм! Мĕнле килме пĕлтĕн? Анне ăçта? Чиперех-и? Аннене тем пулман пулĕ те? Ывăнмарăн-и? – чĕвĕлтетрĕ кинĕ.

– Атте! Кĕçех сан çуралнă кун вĕт-ха! Киле таврăнма вăхăт! Эпир халех! – ăшталанчĕ ывăлĕ те.

... Пĕр çумăрлă каçхине вĕсем патне йытă килсе иленнĕ тет, сивĕпе чĕтрекенскер хăйне пулăшма ыйтнă, Тахçантанпах апат çимен-мĕн, пурăнма вырăнĕ те çук.

Шелленĕ ăна кĕçĕн ывăлĕ, апатлантарнă, пӳртрех çывăрма вырăн сарса панă, ара, тулта сивĕ çумăр çăвать, ăçта кăларса ярăн сиксе чĕтрекенскере?

... Урăх нимĕн те ас тумаççĕ, мĕнле пурăннă, мĕн ĕçнĕ-çинĕ, пач нимĕн те. Ашшĕ-амăш килĕ çинчен те мансах кайнă. Ашшĕ вăхăтра килсе тухман, хăй лартса

хăварнă улмуççи инкеке систермен пулсан мĕн пулса тухĕччĕ-ши?

*Хушса калани: Йăх тымарне ан татăр!*

*Тăван киле таврăнма çулăр такăр пултăр!*

## СИМĔС ТУМА МĔНШĔН УЛĂШТАРНĂ?

Ĕлĕк-авал Яппун çĕршывĕнчи тăмана маляр пулнине вулакансем илтнĕ-тĕр. Мĕн пур кайăка тĕс парнелекенни шăпах вăл пулнă, кашнин кăмăлне тивĕçтернĕ. Анчах пĕррехинче çăхан хăйне хальччен çын курман тĕлĕнмелле хитре тĕспе сăрлама ыйтнă. Тăмана нимĕн тума аптранипе хайхин тĕкĕсене хуп-хура тĕспе сăрланă. Çăханĕ çиленсе лартнă, маляра тавăрма шут тытнă. Лешĕ унран хăранипе сунара çĕрле çеç тухма пуçланă, кăнтăрла йăвинче çывăрнă. Пĕчĕк тусăмсем, эсир çав юмаха вуланă пулĕ-ха? Ку вăл Яппун çĕршывĕнче тахçанах пулса иртнĕ.

Тăмана унтан тахçанах тарса килнĕ ĕнтĕ. Вăл кайăксене тĕрлĕ тĕспе ăста сăрланине чĕр чунсем те илтнĕ. Ун чухне таврара сивĕ хĕл хуçаланнă, вăрманта та, уйма хирте те шурă юр сарăлса выртнă, çил-тăман алхаснă. Пур чĕр чун та шурă кĕрĕкпе çӳренĕ.

Кĕçех хаяр хĕл иртсе кайнă. Çурхи хĕвел хĕртсе пăхнăçемĕн тавралăх симĕсленсе пынă. Ешĕл курăк ăшĕнче пытанма симĕс тĕслĕ çи-пуç кирлĕ. Тăмана патне чи малтанах тилĕ йăкăртатса çитнĕ.

– Тăмана тус, эсĕ сăрлама ăста теççĕ. Ĕçченлĕхӳ çинчен пĕтĕм чĕр чун калаçать. Ман кĕрĕке те симĕслетеймĕн-ши?

– Эй, сăрă таврашĕпе аппаланма та хăратăп. Çамрăк чухне çăхана хура тĕспе сăрласа кӳрентертĕмтĕр. Вăл мана халĕ те юнама пăрахмасть.

– Сăрласа яр-ха, тархасшăн. Эпĕ сан ырă кăмăлна ĕмĕрне те манмăп, туслă пулăпăр, – çапла йăпăлтаткаласа тилĕ тăмана кăмăлне çаврнă, килне симĕс кĕпепе таврăннă.

Тилĕ симĕс тума ăçта туяннине пĕлсен мĕн пур чĕр чун маляр йăви патне пухăннă, пĕр-пĕринпе тупăшсах хăйсене симĕс тĕспе сăрлама ыйтнă. Çапла тăмана сĕм çĕрлечченех ĕçленĕ. Пурте – кашкăр, куян, пакша, пăши, упа – симĕс çи-пуç тăхăнса ешĕл курăк ăшнелле сикнĕ.

Çăвĕпех ыр курса пурăннă вĕсем, сунара тухсан та тăшмансем асăрхаман. Кĕркунне çитнине систерсе сивĕ çил вĕрме пуçласан чĕр чунсем çăл куç шывĕпе çăвăнса симĕс сăрăран тасалнă. Хĕллене хирĕç пурте çĕнĕрен шурă тум тăхăннă.

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче çут çанталăк хĕл ыйхинчен вăранса чĕрĕле пуçласан чĕр чунсем каллех тăмана патне пухăннă. Ку хутĕнче те маляр кашнин кăмăлне тивĕçтернĕ.

Çапла чылай çул хыçа юлнă. Кашни çуркуннех тăмана чĕр чунсене симĕслетнĕ. Анчах пĕр çуркунне унăн кушелĕ пушаннă, симĕс сăрă пĕтнĕ. Тăмана хушнипе чакак чĕр чунсене йыхравлама кайнă. Тем сăлтава пула палăртнă вăхăта тăмана патне крокодил çеç килнĕ.

– Манăн симĕс сăрă пĕтсе çитрĕ. Çуллаччен тупасчĕ ăна, – ăнлантарнă маляр.

Виçĕ тинĕс леш енчи кермен хуçи кайăксенчен хăйĕн симĕс сăрă пурри çинчен пĕлтернĕ, анчах унта çитме пĕртте çăмăл мар. Крокодил ватă тăманана шелленĕ, кушел çакса инçе çула тухнă.

Ывӑнса ҫитнӗскер, юлашки тинӗсрен ҫыран патне аран-аран ҫывхарнӑ. Шывран тухсан канма ларнӑ.

Ҫӑхан крокодил тӑмана валли сӑрӑ илме кайнине пӗлнӗ те вӑл таврӑнасса кӗтсе ларнӑ. Лешӗ ҫырана тухсанах сарлака ҫуначӗсемпе ҫапса кушеле тӳнтерсе янӑ, савӑт пӑкки тухса ӳкнӗ те мӗн пур сӑрӑ юхса тухнӑ. Канса выртакан крокодил симӗс сӑрӑпа вараланнӑ, юлашкийӗ тинӗсе юхса аннӑ. Чӗр чунсем валли пачах та юлман.

Ҫав кунран пуҫласа крокодил хӗлле те, ҫулла та симӗс тумпа ҫӳренӗ. Сӑрӑ юлманран тӑмана ытти чӗр чунсене урӑх тӗссемпе сӑрланӑ. Хӑшне – сарӑ, теприне – хӑмӑр, виҫҫӗмӗшне кӑвакрах кӗпе ҫакланнӑ. Нумай ҫул ӗҫлесе ывӑннӑ тӑмана (ара, сӑррине те хӑйӗнех тупмалла, унтан кашни чӗр чуна юрамалла), ҫавӑнпа ку хутӗнче ӗмӗрлӗхех сӑрланӑ.

## СЫВЛӐМПИЕ ПӖРЛЕ ШЫРАР-И?

Пахчари илемлӗ чечексем хушшинче пӗр тӗлӗнтермӗш керменте Вичкӗн куҫ пурӑннӑ тет. Вӑл тӗнчере мӗн пулса иртнине йӑлтах курса тӑнӑ. Ирсерен сывлӑмпа ҫӑвӑннӑ, каҫсерен аякри ҫӑлтӑр ҫутипе куҫне тасатнӑ. Ҫав ҫӑлтӑр ҫути унӑн куҫне татах та вичкӗнрех куракан, хӑй пекех йӑлтӑртатакан тунӑ-мӗн. Сывлӑм шывӗ куҫӗсене якатнӑ тет. Суккӑррисене Вичкӗн куҫ хӑйӗн вичкӗнлӗхӗн пӗр пайне парнеленӗ, вара лешсен те куҫӗсем ҫивӗчленнӗ.

Ҫапла ҫул хыҫҫӑн ҫул иртнӗ. Вичкӗн куҫӑн ӗҫӗ нумайланнӑҫемӗн нумайланса пынӑ. Ҫӗр ҫинчи ачасем кунӗн-ҫӗрӗн выртса кӗнеке вуланӑ, телевизор ҫывӑхне

ларса кино пăхнă, пĕрмай компьютерпа вылянă. Çавăнпах вĕсен куç вăйĕ пĕтнĕçемĕн пĕтсе пынă, куçлăх тăхăнакан ачасен йышĕ ÿснĕ. Вĕсен ирĕксĕрех Вичкĕн куç патне çул тытма тивнĕ. Лешĕ кашнинех пулăшма тăрăшнă пулин те пур чухне те ĕлкĕреймен. Вăл пĕччен çеç-çке, лешсем нумай, черет вăрăмлансах пынă.

Пĕр ирхине Вичкĕн куç яланхи пекех хăйĕн куçĕсене сывлăмпа çуса якатасшăн пулнă, анчах Сывлăмпи курăнман. Вичкĕн куç хăйĕн керменне таврăнса чирлисене йышăнма пуçланă. Çав кун ăна питех те йывăр килнĕ. Черет çитменрен хăшĕ-пĕрин Вичкĕн куç патĕнче пулмасăрах киле таврăнма тивнĕ. Сывлăмпи тепĕр кунне те курăнман. Сывлăмпа çăвăнманран Вичкĕн куçа Çăлтăрпи те вăйлатайман тет. Вичкĕн куç ăна Сывлăмпи çухални çинчен пĕлтернĕ, шыраса тупма пулăшу ыйтнă.

Çăлтăрпи яланхи пекех Вичкĕн куçа хăйĕн йăлтăркка пайăркисемпе ăшатнă, çутатнă, унтан Сывлăмпие шырама тухса кайнă. Тусем-сăртсем урлă, вăрмансем, хирсем тăрăх шыранă, пĕр çитмен вырăн та хăварман, анчах Сывлăмпи ниçта та тупăнман. Кунĕн-çĕрĕн сулланса çÿресен те усси пулман.

– Тупаймарăм, – кулянса пĕлтернĕ вăл Вичкĕн куçа. Лешĕ пуçне усса хăйĕн керменне таврăннă. Керменĕ те яланхилле ялкăшманнине, чечексем пуçĕсене уснине курсан вăл пушшех кулянса ÿкнĕ, хăйĕн вичкĕнлĕхĕ вăйсăрланнине туйнă.

Ачасем Вичкĕн куç йывăрлăха кĕрсе ÿкнине пĕлсен ăна пулăшма шутланă, кашниех хăйĕн юлташне çавăтса çула тухнă...

Тусăмсем, эсир çак юмаха малалла вĕçлеймĕр-ши?

# АЙВАН КУШАК ÇУРИ

Çĕрĕпе çумăр лӳшкерĕ. Чутах тĕнче йăтăнса анатчĕ. Тĕнче йăтăнсах анмарĕ, анчах та темиçе çăлтăр çĕр çине ӳкрĕ. Чутах путса вилетчĕ, юрать-ха, сиксе тухма ĕлкĕрчĕ, кӳлĕ хĕррине çитсе вырнаçрĕ.

Кушак çури тутлă ыйхăран вăранчĕ, çăвăнчĕ, тумланчĕ, уçăлма тухрĕ. Пушмакĕсене вараларĕ, кӳлĕ хĕррине çума пычĕ.

Ку мĕскер? Кӳлĕре мечĕк тес – мечĕк мар, çăмха тес – çăмха мар, илĕртӳллĕ йăлтăркка вырта парать. Кушак çури асăрхана-асăрхана кӳлĕ хĕрне анчĕ, çаврашкана хăй патнелле кустарчĕ. Шывран туртса кăларчĕ, унпа выляма пуçларĕ. Апла та капла кустарать, унталла-кунталла чуптарать, шăлпа çыртса пăхать, чĕрнисемпе чăрмалать. Хăюлланнăçемĕн хăюлланчĕ, çăлтăра çыртса пăхрĕ, татах, татах, хăй те сисмерĕ, çăлтăра çăтса ячĕ, куç умĕнчех çуталчĕ. Ăна-кăна нимĕнех те ăнкараймарĕ-ха. Ăнсăртан кӳлĕ çине пăхсан хăй куçне хăй ĕненмерĕ: шыв ăшĕнчен ун çинелле йăлтăркка çăмха пăхса тăрать. Ахаль те йăлтăр куçĕсем çиçĕм евĕр йăлт-ялт тăваççĕ.

Савăнсах кайрĕ айван кушак çури:

– Эп халĕ пуринчен хитри!

Хăйĕн хитре çи-пуçне кăтартма кил картине чупса кĕчĕ. Чупса кĕме ĕлкĕрчĕ çеç, – ун çине хĕрлĕ автан сиксе ларчĕ. Автанĕ çавнашкалскер: хăйĕнчен хитре тумланакана юратмасть: ача-и, вата-и, çамрăк пăру е пĕчĕк йытă çур-и, тӳрех сиксе ларать. Йăлтăркка кушак çурине курсан çилленсех кайрĕ, чутах таткаласа пăрахатчĕ. Автанне кура чăххисем те вĕтĕлтете пуçларĕç. Юрать-ха, кил хуçи – вата йытă – пулăшрĕ. Пулăшман

пулсан – пĕтетчĕ. Кама çăлнине курсан хăй те кушак çури çине вĕре пуçларĕ.

Аран-аран аслăк çине хăпарса тарма ĕлкĕрчĕ. Каç пулсан çеç аслăк çинчен хăра-хăрах анма пуçларĕ, çĕр çине анса та çитеймерĕ, тӳперен ун çине темĕнле пысăк кайăк сиксе анчĕ, пĕлĕтелле йăтса кайма пуçларĕ. Кайăка мĕн пур вăйран чĕрнисемпе чăрмаларĕ, аран-аран хăтăлма пултарчĕ.

Ку хутĕнче картлашка айне кĕрсе тарчĕ. Тухма тăрать – каллех кайăк аллине лекесрен хăрать. Ниçта тарса пытанмалли çук: йăлтăрккана пурте кураççĕ, пурте тапăнаççĕ. Темиçе кун çапла нушаланса пурăнчĕ. Ларать кушак çури мяуклетсе, выç хырăмне шăлкаласа.

Шăшисем те кушак çуринчен кула пуçларĕç, сăмси умĕнченех чупса иртеççĕ, урлă сикеççĕ, çут сăмсинчен хӳрисемпе çапса хăвараççĕ. Çак таранччен кушак çури шăши тытса килсен хăй çиместчĕ, çурине хăналатчĕ.

Нуша кулачă çитерет тесе ахальтен каламан çав ваттисем. Хайĕнчен кулакан шăшисенчен пĕри, ыттисенчен шукăльрехххи, кушак çури умĕнче чарăнчĕ те тĕкĕр çине пăхса (ара, кушак çури тĕкĕр евĕрлех çуталса выртать-çке) капăрланма пуçларĕ.

Мĕн пулать те мĕн килет тесе, кушак çури шăши çине ялт-т сикрĕ. Сикрĕ те хӳринчен ярса тытрĕ. Шăши алăк айне тара пуçларĕ, кушакки – хыççăн, хĕсĕнсе ларчĕ. Шăши туртăнать, кушакки талпăнать. Шăшие тытрĕ, çиме пуçласан пырне лартрĕ, ӳсĕрме пуçларĕ, хытăрах ӳсĕрчĕ те кушак çури çăварĕнчен шăшипе пĕрле çăлтăр вĕçрĕ тухрĕ. Шăши – аслăк айне, çăлтăр – тӳпенелле!

Тинех кушак çури йăлтăртатма пăрахрĕ. Çавăнтанпа кушаксем шыва кĕмеççĕ, шыва кĕрекен çăлтăрсене тĕкĕнмеççĕ.

## ÇĔНĔ ÇУЛ

Çĕнĕ çул çывхарать. Çуртсем çĕнелеççĕ, çĕрĕпех çутăсем çунаççĕ, çуртсем çуталаççĕ. Çынсем те çуталаççĕ. Çемьесем Çĕнĕ çулта çутă çуртсенче. Çĕрле çуртасем сутатаççĕ. Çурта çути. Çăлтăр çути... Çутăсем çĕрĕпех çунаççĕ. Çынсем çĕрĕпех çывăрмаççĕ. Çупа çăмах çиеççĕ, çимĕçĕсе-ем! Çеп-çемçе-çке! Çавра çил çаврăнать. Çил çинче çăлтăрсем çиçеççĕ. Çур çĕр çывхарса çитет.

Çамрăксем çепĕç çемĕпе çума-çумăн çаврăнаççĕ, сутăра çĕррисем çуталаççĕ. Çамрăк çамрăках çав, çăмăллăн çаврăнаççĕ.

Çăмăлттай Çеруш çăмламас çăматăпа, çĕтĕк çĕлĕкпе. Çинахви, çĕлĕк çĕлекен, çăмăл çăпатапа. Çинкка – çара çерçи, çӳçне çивĕтленĕ, çӳçĕ сутăра çиçет. Çинкка çамки çине сутă çаврашка çыпăçтарнă, «çунаттисемпе» çатăлтатать. Çемен – çар çи-пуçĕпе. Çăт-çат-çăтти-çат, çăтти-çатти çăтти-çат-т... Çамрăксем çиçеççĕ! Çеруш Çурçĕре çыру çырасшăнччĕ. «Çтаппан, çуркунне çĕмĕрт çеçке çурĕ, çăвĕпех çырла çийĕпĕр. Çырмара, çăл куç çывăхĕнче, çерем çинче çĕр çырли çитĕнет. Çĕр çырли çеçке çурĕ, çĕр çырлине çурлапа çулсах çийĕпĕр. Çăка çеçке çурĕ. Çăкан çырли çук çав, çăка çулçи çавракa. Çеçпĕл çеçке çурĕ. Çулла çумăр çăвĕ, çăлтăрсем çунĕç, çиçĕм çиçĕ. Çурçĕрте çырла çук. Çулла çул çӳреве çит, çырла çийĕпĕр».

Çыруне çыраймарĕ-ха, çырĕ-çке. Çĕнĕ çул! Çĕнĕ çулта çĕнĕ çитĕнӳсем! Çĕнĕ çул çӳревсем! Çилленмĕпĕр! Çăлтăрсем çитиех çĕкленĕпĕр! Çĕнĕ çул – çулталăклăх!

# АСАМЛĂ ФЛЕЙТА

Ку ĕç Çĕнĕ çул уявĕнче пулчĕ.

Йĕри-тавра асамлă чăрăшсем çиçсе лараççĕ, йăлтăр-ялтăр çутăпа ялкăшаççĕ. Такамăн çирĕп алли мана вăшт! çĕклерĕ, кăпăшка пĕлĕт çине илсе хăпарчĕ. Уйсем, вăрмансем çийĕн вĕçнине туйсан çул çӳреве тухнине ăнлантăм.

(Çĕнĕ çул каçĕнче тĕлĕнтермĕшсем пулнине хам та вуласа пĕлнĕ. Унсăр пуçне кукамай та час-часах каласа кăтартатчĕ). Хуласем, юхан шывсем çийĕн вĕçсе иртетĕп. Сасартăк пĕлĕт вăйсăрланчĕ, хăвачĕ сехетсерен пĕтсе пычĕ. Вăл çĕр çинелле анчĕ. Юлашкинчен йывăç тураттинчен çакланчĕ те чăлханса ларчĕ. Чутах ӳкеттĕм, юрать-ха, туратран тытма ĕлкĕртĕм. Кайăк сассипе тăна кĕтĕм. Йывăç çинче шăпчăк йăви пур иккен. Телее, эпĕ унăн чĕпписене лапчăтма ĕлкĕреймен.

Сасартăк аçам пысăкăш ăмăрт кайăк тӳперен пирĕн çине персе анчĕ. Те мана тытасшăн пулчĕ, те шăпчăк чĕпписене. Анчах эпĕ хăрамарăм, пĕлĕт юлашкинчен юлнă шывпа пĕрĕхрĕм ăна. Ăмăрт кайăк тӳрех пĕчĕкленсе ларчĕ, çĕр çине ӳкрĕ.

– Пулăшăр! – кăшкăрать хайхи.

Ăмăрт кайăка шеллес килчĕ. Шăпчăк йăви патне таврăнса пĕтĕмпех каласа кăтартрăм. Иксĕмĕр халсăрланнă кайăка еплерех пулăшасси пирки шутлама тытăнтăмăр.

– Эпĕ пĕлетĕп, – чĕвĕлтетрĕ шăпчăк чĕппи. – Эпĕ ăна мĕнле пулăшмаллине чухлатăп.

– Ăçтан пĕлетĕн? – хыпаланса ыйтрĕ амăшĕ.

– Пĕррехинче, эсĕ килте çук чухне, пирĕн пата çил ачи вĕçсе килнĕччĕ. Ахаль çил ачи мар, асамлă çил ачи. Вăл вĕçен кайăксене пысăклатма та, пĕчĕклетме те

пултарать имĕш. Пире хăйпе пĕрле илсе каясшăн пулчĕ, пĕрле пыракана тĕрлĕ мыскара кăтартма шантарчĕ. Анчах та эпир: «Аннерен ыйтмасăр ниçта та каймастпăр», – терĕмĕр. Çав хушăра çил амăшĕн сасси илтĕнчĕ. Вăл вара пирĕнпе сыв пуллашса ун патне вĕçсе кайрĕ.

– Ăçтарах пурăнать вăл? Инçетре-ши, çывăхра-ши?

– Ăна пĕлместĕп çав, калама ĕлкĕреймерĕ.

– Эпĕ пĕлетĕп, – сасартăк сасă пачĕ пакша. Çил ачи иртнĕ çул ман пата килнĕччĕ. Вăл пурăнакан çĕршывра асамçă хĕрсем пурăнаççĕ тет. Çавсем çил ачине вăйхăват парса тăраççĕ. Кашниех ăна ырă кулăллă шерпет ĕçтерет. Кашни кулă пĕрчи çил ачине вăйлăрах, ырăрах пулма пулăшать. Ирсерен вăл килĕнчен вĕçсе тухса пур çĕрте те ырă ĕç пурнăçлать. Каçхине кăна таврăнать, тӳрех ăшă вырăн ăшне кĕрсе выртать. Хăш-пĕр чухне асамçă хĕрсем таçта çитиех вĕçсе каяççĕ иккен. Килĕсене вăхăтра таврăнаймаççĕ, çил ачи вĕсене кĕтсе вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланать, вырăнĕ çинчен те тăрайми пулать. Кулянма пачах та юрамасть-çке ун. Кулă шерпечĕ çеç кулянннине ирттерсе яма пултарать.

– Асамçă хĕрсене киле епле тавăрмалла?

– Асамлă флейта кирлĕ. Ун сассипе çеç вĕсем çил ачи çинчен аса илеççĕ.

– Флейтине ăçтан тупмалла? – аптрарăм эпĕ.

– Эпĕ пĕлетĕп, – сас пачĕ суккăр тăмана. – Пĕррехинче вăйлă çил тухрĕ те пĕртен-пĕр чĕппĕме хăйпе пĕрле илсе кайрĕ. Тепĕр темиçе кунран каллех килчĕ вăл. Йăвана темле çыру кĕрсе ӳкрĕ. Çил ачи сисиччен ман чĕппĕм ун кĕсйине чиксе янă иккен. Чиперех пурăнатăп тет. Ăна асамлă çĕршывра килĕшнĕ. Вăл унта асамçă хĕре юратса пăрахнă. Туй тусах пĕрлешнĕ. Ман чĕппĕме шăпах флейтăна сыхлама шаннă унта.

Флейта ылтăн арчара, ылтăн конверт ăшĕнче выртать. Арчан уççи ятарлă керменте упранать. Унта мĕнле çитмеллине вăл çеç пĕлет...

Ăмăрт кайăк, куляннипе, сасă та кăлараймасть.

– Юрĕ, эпĕ сире пулăшăп. Сана çуралнă кун ячĕпе анне парнеленĕ шăрçана парса ярăп. Ăна чĕппĕме кăтартсан вăл çийĕнчех пулăшĕ. Анчах та асăрхануллă пул: шăрçана тавăрмасан унăн асамлă вăйĕ пĕтет, – мăй çыххинчи пĕр шăрçине кăларса аллăмран тыттарчĕ тăмана. Хăй çавăнтах айккинелле лăпăс-лăпăс вĕçсе кайрĕ.

Ăçталла каймалла? Хăш еннелле çул тытмалла – пĕлместĕп. Йывăç тăрринчен антăм та шухăша путрăм.

– Эпĕ сана пулăшатăп, – кĕтмен çĕртен илтĕнчĕ çĕлен сасси. Имленĕ шыв илсе килĕн-и?

– Юрĕ, – килĕшрĕм эпĕ.

Çĕлен туртăнса шик! шăхăрчĕ, тӳпере çиçĕм çиçме тытăнчĕ. Вăйлă çумăр çума пуçларĕ. Кĕтмен çĕртен чарăнчĕ. Вара асамат кĕперĕ ялкăшма пикенчĕ.

– Асамат кĕперĕн пĕр пайăркинчен турт. Вăл сана хăй çине лартать, асамлă çĕршыва илсе çитерет, – терĕ çĕлен.

Хăра-хăрах асамат кĕперĕ патне алла тăсрăм. Çĕлен каллех шăхăрчĕ, темле майпа кермен умне анса та лартăм.

Тăмана чĕппине амăшĕнчен салам каласа шăрçа тыттартăм. Вăл мана уçă пачĕ. Арчине уçрăмăр та флейта туртса кăлартăмăр. Тахăшĕ тӳрех флейта калама пуçларĕ. Кĕвĕ янăранăçемĕн асамçă хĕрсем пĕрин хыççăн тепри киле таврăнма тытăнчĕç. Тӳрех ташлама-юрлама, кула-кула тĕрлĕ вăйă выляма пикенчĕç: шӳтлеççĕ, сикеççĕ, вĕçеççĕ, пытанчăкла выляççĕ. Унтан кашниййĕ

пĕчĕк чашăк илсе ҫил ачи патне ҫывхарчĕ, ăна шерпет ĕҫтерчĕ. Унăн сăнĕ ҫуталма пуҫларĕ. Шерпетне вăл мана та ĕҫтерчĕ. «Кайрăмăр!» – терĕ хавассăн.

Тăмана панă шăрҫана эпĕ хăвăртах кĕсьене чикрĕм. Йывăҫ патне ҫитнине хам та сисмерĕм. Ҫил ачи ăмăрт кайăк ҫийĕн вĕҫсе иртрĕ. Ҫуначĕпе сулчĕ те леш тӳрех тӳпенелле ыткăнчĕ.

– Тавтапуҫ! – терĕ савăнса.

Халĕ вăл ту хушшинче пурăнать. Ҫулталăкра пĕрре кайăксенчен салам каласа ярать.

Ҫĕлене ăшă шывпа пĕрĕхрĕм, те куҫ умĕнчех ҫири хура тумне хывса пăрахрĕ, ылтăн тум тăхăнчĕ. Ҫавăнтанпа унăн кăмăлĕ те улшăнчĕ. Тăманана та пулăшрăм: ачи парса янă шывпа куҫне пĕрĕхрĕм. Халĕ вăл ҫĕрле те лайăх курать.

Асамлă шыв пулăшнипех пакша та хитреленчĕ. Турат ҫинчен турат ҫине сиксе ҫӳрет, пурне те тĕлĕнтермĕш юмах каласа савăнтарать.

## ҪĂЛТĂРЧĂКСЕМ

Ҫак ĕҫ пин-пин ҫул каялла, ҫуркунне ҫитнĕ май ҫут тĕнче чĕрĕлме пуҫланă чухне, пулса иртнĕ тет.

Пĕр карчăкпа старик пурăннă, пĕртен-пĕр ывăлне ҫитĕнтернĕ. Темех ĕҫлемен вĕсем, старикĕ сунара ҫӳренĕ, яланах ăнăҫупа таврăннăран сĕтел ҫинчен аш-какай таталман. Карчăккипе ывăлĕ пахча ҫимĕҫ ӳстернĕ.

Ҫитĕннĕҫемĕн ывăлĕ Йăван та ашшĕпе пĕрле сунара пырасшăннине пĕлтернĕ, анчах ашшĕ, тем пулас-курас пур тесе, ывăлне илсе кайман.

– Эсĕ пулă тытма ҫӳре, – тесе ăна ăскăч майлаштарса панă.

Сунара тем пекех каясси килсен те килĕшмех тивнĕ Йăванăн. Вăл ăскăч илсе кӳлĕ хĕррине çул тытнă. Сывлăм ӳкнĕ улăх тăрăх утнă май çут çанталăк илемĕпе киленнĕ, ирех вăраннă кайăксен чĕвĕл сассипе чунне йăпатнă, йывăçсен хушшипе пынă чухне çил ачи чупса иртнĕ, каччăна лăпкă варкăшпа уçăлтарса хăварнă. Кĕçех хĕвел тухнă, унăн ылтăн пайăркисем питрен кăтăклама пуçланă: «Хăвăртрах, васкарах, пулăсăр тăрса юлатăн», – йĕкĕлтенĕ вĕсем каччăна.

Йăван васкаман, сывлăмпа питне çунă, çăл куçран тăрă шыв ĕçнĕ, тавралăх илемне сăнанă.

Кĕçех вăл кӳлĕ хĕррине çитсе майлашнă, ăскăчпа шывра пулă шырама пуçланă. Чылайччен аппаланнă – кăлăхах, ăскăча пĕр пулă та лекмен.

«Тытаймастăн, тытаймастăн», – йĕкĕлтесе йăлт-ялт! сиккеленĕ кӳлĕ варринчи пулăсем.

«Тытаймарăн, тытаймарăн», – кваклатнă шапасем.

Куçпа курнине пурне те алăпа тытаймăн, – тенĕ ваттисем. «Киле пулăсăрах таврăнма тивет ĕнтĕ», – текелесе, каччă киле кайма пуçтарăннă. Юлашки хут телейне тĕрĕслесе пăхма шутланă. Ăскăча шаларах чикнĕ, аран-аран туртса кăларнă. Ăскăчра çаврака йăлтăр мечĕк курсан питĕ тĕлĕннĕ:

– Мĕн ку? Епле хитре! – мечĕке тытма тăнă, лешĕ алла кĕмен, шуса тухса тарнă. Мĕн тумалла? Йăван ăскăча çыхса лартнă, аран-аран йăтса килнелле утнă.

Киле çитсен мечĕке ăскăчран кăларасшăн тем пек тăрăшсан та усси пулман. Мĕн тăвас? Кĕлете кĕнĕ, ăскăча хăй вырăнне çакасшăн пулнă каччă – пăта тăпăлса тухнă. Вара ăскăча кĕлетри юман пичке çине хунă, хăй апат çиме пӳрте кĕнĕ.

Ашшĕ сунартан таврăнман-ха, амăшĕ вучах чĕртсе янă, яшка пĕçерме хатĕрленнĕ.

– Анне, пулă тытаймарăм, пулă яшки пĕçерейместĕн ĕнтĕ. Эпĕ тĕлĕнмелле япала тупса килтĕм, кĕлете тухса пăх-ха.

Амăшĕпе ывăлĕ кĕлете тухнă, ăскăч пичке хĕрринелле куçнă пулин те ӳкеймен. Амăшĕпе ывăлĕ тĕлĕннĕ, ăскăча хăй вырăннех майлаштарса хунă та айккинчен сăнаса ларнă: кам-ха ăскăчпа вылять? Никам та курăнман, ăскăчри мечĕк хăех пичке хĕрринелле шунă. Кунĕпех тĕлĕнсе сăнаса ларнă пулин те тупсăмне тупайман Йăван.

Каçхине ашшĕ сунартан таврăннă, хăй нимĕн те тытайманни çинчен тĕлĕнсе пĕлтернĕ:

– Сунара çӳреме пуçланăранпа пĕрремĕш хут! Пеме хатĕрленетĕп çеç – куç умĕнче тем йăлт! тăвать, тĕрĕс перейместĕп. Мулкач тарса çухалчĕ. Иккĕмĕш хутĕнче тилĕ йĕрĕ çине лекрĕм, пеме хатĕрлентĕм – каллех тем чăрмантарчĕ. Тĕлĕнмелле! Пĕрремĕш хут тĕл перейменрĕм. Пĕрремĕш хут пуш хутаçпах таврăнтăм.

Ывăлĕпе амăшĕ ăна асамлă мечĕк çинчен каласа панă. Виççĕшĕ те кĕлете тухнă. Хĕвел аннă ĕнтĕ. Тӳпене çутă çăлтăрсем те тухнă. Кĕлет тавра çăлтăрсем вылянине курсан кусем тата тĕлĕннĕ.

Пĕр çăлтăрĕ Йăван умнех пынă.

– Кам эсĕ? Мĕншĕн тӳперен антăр? Мĕн шыратăр? – тĕпченĕ каччă.

– Эпĕ Çăлтăрчăк. Тӳпере пурăнатăп. Пирĕн кашнин уйрăм пӳлĕм пур.

– Çĕр çинче мĕн шыратăн?

– Эпĕ хальлĕхе çамрăк-ха. Çĕр çулта çеç. Çăлтăрсен ача-пăча садне çӳретĕп. Манăн тус-тăван нумай. Пире

кашнинех пĕрер мечĕк парнеленĕ. Çав йăлтăркка çаврака мечĕкпе пирĕн ĕмĕр тăршшĕпех вылямалла, ăна çухатма юрамасть. Çухатсан ăна урăх памаççĕ-çке. Хăш чухне хамăр тимсĕрлĕхе пула мечĕк аларан тухса ÿкет, ялкăшса, çутатса çĕр çине вĕçсе анать.

– Çапла, эпир хăш чухне куркалатпăр çăлтăр ÿкнине, – тенĕ Йăван.

– Çăлтăр ÿкмест, пирĕн мечĕк ÿкет. Анчах кун пекки питĕ сайра пулать. Мечĕке çĕр çине ÿкерсен яланлăхах çав теттесĕр тăрса юлатăн: сана никам та хăйĕн мечĕкне парнелемест, тепĕр мечĕкпе вăхăтлăх вы́ляма ирĕк парсан та ăна хуçине каялла тавăрма тивет. Эпĕ чирлерĕм, паян тимсĕртерех пултăм, мечĕке ÿкертĕм. Эсĕ ăна ăскăчпа тытнă, çак кĕлете килсе хунă. Мечĕке ÿкерсен эпĕ ăна çийĕнчех шыраса тупрăм, анчах ăскăча уçма ниепле те мел çитерейместĕп. Тархасшăн, тавăрса пар мана хамăн теттене, – мĕлтлетнĕ çăлтăрчăк.

Ашшĕ-амăшĕпе канашланă хыççăн Йăван çăлтăрчăксем патне хăнана кайса килме шутланă.

– Енчен те эсĕ мана çăлтăрсем патне илсе кайса хăвăр пурнăçпа паллаштарсан эпĕ сана мечĕке тавăрса паратăп! – тенĕ вăл.

– Хаваспах! – килĕшнĕ кĕтмен хăна.

Йăван ашшĕ-амăшĕпе сыв пуллашнă. Ăскăча уçса тĕлĕнтермĕш теттене илнĕ те Çăлтăрчăкпа пĕрле çула тухнă. Мĕлт-т! тунă та самантрах çăлтăрчăксен керменне çитсе ларнă.

– Анне, çĕр çинче ырă çын сахал мар, вĕсенчен пĕри мана хамăн теттене тавăрса пачĕ, эпĕ ăна кунта хăнана илсе килтĕм, – савăнăçне амăшне пĕлтернĕ Çăлтăрчăк.

– Тавтапуҫ, – тенӗ Ҫăлтăрпи, хăнана хăйӗн керменепе паллаштарма пуҫланă. – Пирӗн ҫемье питӗ пысăк: пин-пин йăлтăр ҫăлтăрчăк. Сăнран ҫăлтăрсем, пирӗн ывăлсемпе хӗрсем, мăнукăмсем, пӗр-пӗринчен ытлах уйăрăлса тăмаҫҫӗ. Эпӗ вӗсене куҫран пăхса тата кăмăлне курса уйăратăп. Хăшӗн куҫӗ ҫивӗчрех – ҫавă ҫутăрах ялкăшать, тепри – сӳрӗкрех, виҫҫӗмӗшӗн куҫӗ пачах хупăнмасть, ялан ҫунса тăрать. Чалăш куҫли те пур пирӗн хушăра. Кăмăлӗсем те тӗрлӗрен: йăпăлтисем, харсăррисем, чăрсăррисем те тупăнкалаҫҫӗ. Ытларахăшӗ хаваслă, лăпкă, сăпайлă. Вăтанчăкраххи те сайра-хутра курăнкалать, – ăнлантарнă ҫăлтăрсен амăшӗ. Кермен алăкӗ пач та хупăнман, хӗр-ҫăлтăрчăксемпе каччă-ҫăлтăрчăксем пӗрре кӗнӗ, тепре тухнă.

«Мечӗкпе выляма тухаҫҫӗ пулас», – ăнкарса илнӗ Йăван. Сăнарах пăхсан хӗр-ҫăлтăрчăксем – вăрăм аркăллă сарапанпа, каччă-ҫăлтăрчăксем вăрăм чаппанпа сӳренине асăрханă. Йăван ҫăлтăрчăксем вылянине курма тухнă. Утнă-чупнă чухне сарапан аркисем час-часах ура айне пулнă та вӗсенчен йӗри-тавра кӗмӗл шевле сапаланнă.

– Ҫынсем ҫакна курсан: «Ҫăлтăрсем выляҫҫӗ», – теҫҫӗ, – ăнлантарнă Ҫăлтăрпи.

Амăшӗ чӗнсен ҫăлтăрсем кермене пуҫтарăннă.

– Ачасем, паян хамăрăн юратнă ҫимӗҫе – пӗлӗтсенчен пуҫтарса пӗҫернӗ шăнтармăша ҫиейӗпӗр. Кам пӗлӗтсене шăпăрпа шăлса пуҫтарма каясшăн?

– Ман каяс килет!

– Эпӗ каятăп!

– Паян манăн черет! – пӗр-пӗринпе тупăшса мӗлтлетнӗ ҫăлтăрсем.

Ҫăлтăрпи ачисене пăхса ҫаврăннă, Вичкӗн куҫа михӗ тыттарнă, Ҫивӗч куҫа шăпăр парса янă.

Вăхăт нумай та иртмен – хастаррисем таврăннă. Михĕ тулли пĕлĕт йăтса килнĕ. Амăшĕ пĕлĕтрен тутлă шăнтармăш пĕçернĕ, пурне те сĕтел хушшине чĕннĕ. Шăнтармăша чăмламасăр та çиме пулать, хăех ирĕлсе аннă май пыра уçăлтарса ярать, куç-пуçа çутăлтарать.

– Эпир çиекен çимĕçе никам та çиеймест, вĕсем пурте йăлтăркка: йăлтăр кăвак груша, йăлтăр хĕрлĕ хăяр, йăлтăр арпуспа дыня, йăлтăр абрикоспа апельсин. Çак пĕçертекен çимĕçсене çăлтăрчăксем çеç çиме пултараççĕ, – мухтанарах пĕлтернĕ Çăлтăрчăк.

– Усал çил-тăвăл алхаснă чухне пирĕн çи-пуç вáраланать, вара анне пире пурне те Уйăхпи патне кайма хушать. Вăл пирĕн çи-пуçа тасатса тăрать. Уйăхпи çине анса ларнă чухне тĕкĕшмесĕр пулмасть, яланах пĕр вырăна сикетпĕр, çавăнпа унта шăтăк-путăк нумай. Йăлтах эпир ашкăннине пула, – пĕлтерме васканă çăлтăрсем. – Уйăхпи пире кӳренмест, яланах: «Хăнана килсех çӳрĕр», – тесе ăсатать.

Йăван кĕсйинчи автан авăтсан хăйĕн килне таврăнма вăхăт çитнине ăнланнă:

– Тавтапуç, – тесе çăлтăрсемпе сыв пуллашнă.

Çăлтăрчăк хăйĕн тутăрĕпе сулнă çеç – Йăван тăван килĕ умне çитнĕ.

«Эпир нихăçан та сӳнместпĕр! Пире курас тесен каçсерен урама тухма манса ан кай!»

Çăлтăрчăкăн çак сăмахĕсене аса илсен Йăван каçсерен урама уçăлма тухнă, тӳпене тинкерсе: «Ăçтарах-ши çăлтăрчăксен керменĕ? Тепре çитсе курасчĕ унта», – тесе ĕмĕтленнĕ.

Çăлтăрсем çаплипех мĕлтлетеççĕ, тӳперен пире сăнаççĕ, кашнине телей парнелеççĕ. Ман пата та пĕр çăлтăрĕ анчĕ те çак юмаха хайлама телей парнелерĕ!

## ТУПМАЛЛИ


| | |
|---|---|
| 37 пĕр тăван | 3 |
| Чĕр чунсен урокĕнче | 4 |
| Ют çĕр-шывра | 7 |
| Лева – арăслан | 9 |
| Çăл куç пулăшнă | 11 |
| Ывăл шырани | 15 |
| Симĕс тума мĕншĕн улăштарнă? | 20 |
| Сывлăмпие пĕрле шырар-и? | 22 |
| Айван кушак çури | 24 |
| Çĕнĕ Çул | 26 |
| Асамлă флейта | 27 |
| Çăлтăрчăксем | 30 |

15.00